**Муркаш районĕ 65 çул тултарнă май**

# Пĕр-пĕринчен вĕреннĕ

Муркаш районĕ пултаруллă та ĕçчен çынсемпе пуян. Тĕрлĕ отрасльсенче яланах аксакалсемпе юнашар ĕçлеме вĕренсе пыракан çамрăк специалистсем вăй хунă. Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашса ĕçре çитĕнӳсем тума вĕсене районта иртекен тĕрлĕ мероприятисем пулăшнă. Кашнин çитĕнĕвĕ вара района малаллах аталантарнă.

Çак сăн ӳкерчĕкре эсир потребкоопераци тытăмĕн ĕçченĕсене куратăр. Ку сăн ӳкерчĕке 1985 çулхи август уйăхĕнче Мăн Сĕнтĕрте тунă.

«Пирĕн районта пĕр тапхăр кашни çулах сутуçăсем, товароведсем, поварсем тата официантсем хушшинче районти комсомол организацийĕн пуçарăвĕпе ăмăртусем иртнĕ, – каласа парать сăн ӳкерчĕкри пĕр пике – паян Муркаш райпо правленийĕн председателĕ Роза Владимировна Скворцова. – Районти икĕ райпо тата кӳршĕллĕ Горномарийски район райповĕн ĕçченĕсем пухăнатчĕç ăмăртусене. Эпĕ потребкоопераци тытăмĕнче 1981 çултанпа ĕçлетĕп. Çак ăмăрту вара ун чухнех иртетчĕ. Пире, çамрăксене, тĕллевсене пурнăçласа пыма, татах та хастартарах пулма хистетчĕ вăл. Хастарлăха вара эпир ĕçре кăтартнă. Кӳршĕсемпе ăмăртни коллектива çитĕнӳсем патне малаллах турттатчĕ, ĕçтешсене пĕр чĕлхе тупма пулăшатчĕ.

Сăн ӳкерчĕкре халĕ «Сказка» кафе заведующийĕ пулса ĕçлекен аслă повар Антонина Владимировна Карпова та та пур. Вăл 1978 çулта ятарлă пĕлӳ илнĕ хыççăн ресторанта повар пулса ĕçлеме тытăннă. «Çав вăхăтранпах кӳршĕллĕ виçĕ райпо ĕçченĕсен ăмăртăвĕ иртнине астăватăп. Ун чух ятарлă пĕлӳ илнĕ поварсем нумай марччĕ. Поварсем темĕн тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрлеме пултарнине курса пĕр-пĕринчен вĕренмелли те сахал марччĕ. Çичĕ çул çав ăмăртусене хутшăнса хамăн ăсталăха туптанă эпĕ унта. Ку сăн ӳкерчĕке тунăранпа вăхăт чылай иртрĕ, анчах ăмăрту саманчĕсем куç умĕнчех», – тет вăл çамрăк специалист пулнă вăхăта аса илсе.



«Радуга» ресторанта официантка пулса тăрăшакан Алевтина Васильевна Ефремова та çак сăн ӳкерчĕкрех. «Вăл вăхăтра конкурссем питĕ нумайччĕ. Питĕ килĕшетчĕç вĕсем. Пире, официанткăсене, сĕтел хатĕрлеме пĕлнине тĕрĕсленĕччĕ. Вĕренмелли-курмалли сахал мар пулнă. Çапла ĕçе çĕнĕлĕхсене те кĕртсе пынă, ĕçлес туйăм та пысăк пулнă. Çамрăк чух вара вĕсем питĕ кирлĕ», – пĕлтерет вăл хăйĕн шухăшне сăн ӳкерчĕке тишкернĕ май.

Сăн ӳкерчĕкпе иртнĕ кунсем çине пăхса пĕтĕмлетӳ тума та пултаратпăр. Çын малашлăхĕ ĕçпе çыхăннă, район малашлăхĕ вара – çынсемпе. Пултаруллă та хастаррисемпе. Кашни отрасльтех кирек хăш вăхăтра та çакнашкал маттурсем тăрăшнипе ĕнтĕ паян Муркаш районĕ республикăра малтисен ретĕнче.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Çапла йĕркеленнĕ район

1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕ Муркаш районне йĕркелемелли çинчен йышăну тунă. Çак йышăнăва РСФСР Аслă Канашĕн Президиумĕн Указĕпе 1944 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. Çав çулах, мартăн 23-мĕшĕнче, Муркаш районĕнчи ĕç çыннисен депутачĕсен пĕрремĕш сессийĕ те иртнĕ. Вăл вăхăтра Муркаш районне пурĕ 18 ял Совечĕ кĕнĕ: маларах Сĕнтĕр районĕ шутланнă Атапай, Кашмаш, Муркаш, Оринин, Пашалукасси, Çатракасси ял Совечĕсем, Ишлей районĕ шутланнă Шурча, Очăкасси, Тивĕш, Хăймалакасси, Шетмĕпуç, Энтимĕркасси, Ямайкасси, Янăш, Ярапайкасси ял Совечĕсем тата Элĕк районĕнче пулнă Панкли, Шĕвĕш, Йӳçкасси ял Совечĕсем.

Чăваш АССР Аслă Канашĕн июнĕн 29-мĕшĕнчи постановленийĕпе килĕшӳллĕн çав çулах Хăймалакассипе Энтимĕркасси ял Совечĕсем каялла Ишлей районне куçнă, Ямайкасси ял Совечĕ – Красноармейски районне. 1944 çулхи августăн 1-мĕшĕнче çырнă актпа Советски районĕнчен Тойкилтĕ тата Чуманкасси ял Совечĕсем Муркаш районĕнче шутланма пуçланă.

**Ырă аса илӳсем асрах**

# Ун чухне хуçалăхсенчен тухма пĕлмен

Мана пурнăç шăпи 1966 çулта Муркаш районне илсе килчĕ. Çав çулхи ноябрь уйăхĕнчен пуçласа ял хуçалăх управленийĕнче ĕçлеме пуçланă. Ял хуçалăх управленине ун чухне Кронид Константинович Созонов ертсе пыратчĕ.

Манăн вăл вăхăтри ĕçсем çинчен кăштах асăнса хăварас килет. Вăл вăхăтра управлени штатĕнче 19 çын шутланнă. Çак коллектива питĕ пултаруллă, ăслă, ял хуçалăхне лайăх пĕлсе, хуçалăх ертӳçисемпе пĕр шухăшлă пулса ертсе пыратчĕ К.К. Созонов. Вăл Евтихий Андреевич Андреевпа тачă çыхăну тытнă, Евтихий Андреевич хăй те ял хуçалăх управленине тăтăшах пырса çӳренĕ, пĕрле канашланă.

Кашни тунти кун управленире ĕçлекенсемпе канашлу ирттертчĕ. Эрнере 3 хуçалăхран кая мар тухса çӳремеллеччĕ. Унсăрăн хытах лекетчĕ.

Ял хуçалăх управленийĕнче ун чухне ГАЗ-69 пĕр çăмăл автомашина пулнă. Асфальт çулсем çук. Çулсем япăх пулнипе пур чухне автомашинăпа та тухса çӳреймен. Уйрăмах хĕллехи, çуркуннехи шыв-шур вăхăтĕнче. Çавăнпа та тепĕр чухне хуçалăхсене К.К. Созонов çуранах 2–3 кунлăха каятчĕ. Специалистсем хуçалăхсене çуранах, май килнĕ чухне трактор çуни çине ларса кайнă, çапах та тумалли ĕçсене пурнăçланă. Ответлăх туйăмĕ çирĕп пулнă. Вăл вăхăтсенче хуçалăхсенче столовăйсем те пулман, çĕр выртма та уйрăм çынсем патне вырнаçмалла пулнă.

Ял хуçалăх управленийĕн ертӳçин вăл вăхăтра йывăрлăхсем сахал мар пулнă. Минералла удобренисен, аммиак шывĕ туянма çăмăл марччĕ. Çыхăнусем пулни пулăшнă. Тӳрремĕнех Мускавпа çыхăнса та ыйтусене татса пама тивнĕ. Кунсăр пуçне кашни кунах А.И. Кушковпа (ун чухне «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн ер-



тӳçи) канашлатчĕç. Шутласа пăхма та йывăр, епле кăна вăхăтне çитеретчĕ. Тăтăшах хуçалăхсенче пулатчĕ пулин те (ун чухне районĕпе 34 хуçалăхчĕ), каласа хăварнă вăхăта управление таврăнатчĕ.

Уйсенче тыр-пул шăтса тухсан вĕсене пăхса тухма агрономсене пуçтарнă. К.К. Созонов пуçлăх пулсан та агрономсемпе пĕрле груз турттармалли автомашина çинче çӳретчĕ. Паллах, тусанĕ те пулман мар ĕнтĕ. «Кабинăра ларса пырсан мĕн курма пулать?»– тетчĕ вăл. Кашни хуçалăхăн уйнех тĕплĕн тĕрĕсленĕ.

Ун чухне автобуссем те пулман пулĕ. Тен пулсан та вĕсемпе çӳрес темен пулĕ. Юлашкинчен «Хлебороб» хуçалăх уйĕсене пăхнă. Вăл хуçалăхра Р.В. Федосеева агроном пулса ĕçлетчĕ. Çĕр пулăхĕ начар пулин те, вĕсен уйĕсем питĕ тикĕсчĕ, калчисем хитреччĕ.

Пĕтĕмлетӳ хыççăн Атăлта шыва кĕнĕ. Пирĕн ертӳçĕ Атăлăн çурри таран ишсе кайса каялла çырана килетчĕ. Эпир шикленсе ларattămăр. Питĕ вăйлă, çирĕп сывлăхлăччĕ.

Вăл вăхăтра аммиак шывĕ нумай турттарнă, çĕре кăпкалатнă чухне хывса хăварнă. Аммиак шывĕ цистернăсенче мĕнле упраннине тĕрĕслеттеретчĕ, анализсем илсе Çĕрпӳри лабораторие яраттăмăр. Ку вăл унăн пахалăхне кура мĕн чухлĕ хывмаллине пĕлме кирлĕ пулнă.

Тата хире тислĕк илсе тухса купалассипе Е.А. Андреев яч. хис. хуçалăхри пек штабельсем тумалли пирки çирĕп ыйтатчĕ. Кашни кварталтах хуçалăхсем мĕнле ĕçлесе пыни çинчен экономика кăтартăвĕсене тутаратчĕ.

Çавăн пек тăрăшуллă, авторитетлă çын пулнă ял хуçалăх управленийĕн ертӳçи К.К. Созонов. Анчах та унăн ĕмĕрĕ кĕске пулчĕ. 30 çултах пирĕнтен уйрăлса каймалла пулчĕ. Халĕ пулсан тен çăлса та хăваратчĕç пулĕ ăна вăл чиртен. Унăн ырă ĕçĕсене вăл вăхăтра ĕçленĕ хуçалăх ертӳçисем (нумайăшĕ çук ĕнтĕ), специалистсем ырăпа асăнаççĕ.

Ун вăхăтĕнче тĕп экономистра А.Ф. Борисова, тĕп инженер пулса И.Ф. Бушуев, тĕп ветврачра М.А. Миронов ĕçленĕ. Вĕсем хуçалăхсемшĕн ырă ĕçсем сахал мар тунă. Çакна хуçалăхсенчи специалистсем кăна мар, колхозниксем те манмаççĕ. Мироновпа Бушуева уйрăмах «йывăр» хуçалăхсене, фермăсене çирĕплетсе параççĕччĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем управленире кăна мар, парти райкомĕнче те, райĕçтăвкомра та авторитетлă пулнă. Анчах та паян вĕсем пирĕнпе çук ĕнтĕ.

Çĕр ĕç культурине лайăхлатас, тыр-пул тухăçне ӳстерес, агротехника требованийĕсене тĕпе хурса ĕçлес тесе ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕ Е.А. Александров нумай вăй хунă. 92 çула çитрĕ пулин те, паян та çирĕп сывлăхлă-ха.

Хам 33 çул хушши ял хуçалăхĕнче ĕçленĕ хушăра ял хуçалăх управленийĕн 13 ертӳçипе тачă çыхăнса ĕçлеме тӳр килчĕ. Кашниех ĕçленĕ вăхăтра ял хуçалăхне аталантарма хăйĕн тӳпине хывнă. Кашниех специалистсенчен çирĕп ыйтатчĕ. Эпир те хамăра шанса панă ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçлама тăрăшнă. Уйрăмах К.К. Созонов, В.С. Краснов, Л.С. Софронов çирĕп ыйтатчĕç. Вĕсене суйма май çукчĕ. Эпир пулнă çĕрте вĕсем пулса курнă та ĕнтĕ. Вĕсем çуллахи вăхăтра 3–4 сехетре уйра пулнă, хĕллехи вăхăтра ирхине 5 сехетре фермăсене çитнĕ. 8–9 сехете управление çитсе пире «шĕкĕлчетчĕç». Вăт çапла ĕçленĕ вĕсем.

Тата вăл вăхăтра хуçалăхсенче питĕ пултаруллă агрономсемччĕ. Уйрăмах Р.В. Федосеева («Хлебороб»), А.П. Филиппова (ял хуçалăх управленийĕн агрономĕ), Е.А. Ильина (Е. Андреев яч. хис.), В.А. Белов («Нива»), А.А. Калинин («Оринино»), А.Н. Кожевников («Свобода») нумай çул ӳсекен курăксене çитĕнтерессипе лайăх ĕçлетчĕç.

Муркаш районĕ çĕр улми туса илессипе республикăра яланах малти вырăнта пулнă. 1975–1980 çулсенче район 4800 гектар çĕр улми лартса ӳстернĕ. Ăна патшалăха та ытлашшипех сутнă, вăрлăхлăх та хывнă, малашлăха пăхса ĕçленĕ.

Пурнăç малаллах шăвать. Анчах та тĕрлĕ кăлтăксемпе чăрмавсене пула хальхи вăхăтра ял хуçалăхĕ ниепле те çирĕппĕн аталанса каяймасть-ха. Ял хуçалăх продукцийĕ йӳнĕ, ăна сутма та ансат мар. Туянмаллисен хакĕсем питĕ пысăк. Çапах та пурăннă чухне малаллах талпăнмалла, йывăрлăхсене çĕнтерме тăрăшмалла.

Манăн та ачалăх та, вĕреннĕ вăхăт та, пурнăç çулĕ те çăмăл пулман. Пурăннă чухне мал ĕмĕтпе пурăнас пулать. Йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлмелле. Тĕрĕссипе вара хама ырă ертӳçĕсемпе ĕçлеме май килнишĕн телейлĕ тесе шутлатăп.

Халĕ те Муркаш районне пултаруллă ертӳçĕсем Ю.А. Иванов, В.К. Ананьев ертсе пыраççĕ. Вĕсен яланах ĕçре ăнăçу, çемьере телей пултăр.

**А. АНИСИМОВА.**
**Çĕньял Хуракасси ялĕ.**



**Сăн ӳкерчĕксенче: 1964–1970 çулсенче ял хуçалăх управленийĕн ертӳçинче ĕçленĕ К.К. Созонов; ял хуçалăх управленийĕнче вăй хуракансем (1977 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕ).**